ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ МУНИЦИПАЛИТЕТ СЛУЖБИ ÇИНЧЕН" САККУНЕ ÇУМНЕ 1-МЕШ ХУШСА ÇЫРНИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи муниципалитет служби çинчен" 2007 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 62 №-лĕ саккунĕ (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2007, 74 №; 2009, 80 №; 2011, 90 №; 2012, 92 (I том), 94 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 11 №-сем; 2014, 5 №; 2015, 5, 12 №-сем; 2016, 6, 12 №-сем; 2017, 9 №; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ) çумне "Чăваш Республикинчи Муниципаллă службăн должноçĕсен реестрĕ" 1-мĕш хушса çырнин "Вырăнти хăй тытăмлăхăн ĕç тăвакан – хушу паракан органĕсенчи должноçсен переченĕ" I пайĕн "Ертӳçĕсен должноçĕсем" 1-мĕш çум пайне çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) "Муниципаллă округăн, хула округĕн администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ 1-1-1-03"

позици хыççăн çакăн пек çырса позици хушса хурас:

"Хула округĕн управин ертӳçи 1-1-1-04";

2) "Хула округĕнчи район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ 1-1-2-03"

позици хыççăн çакăн пек çырса позици хушса хурас:

"Хула округĕн управин ертӳçин çумĕ 1-1-2-04";

3) "Муниципаллă округăн администрацийĕн территори пайĕн пуçлăхĕ 1-1-3-02"

позици хыççăн çакăн пек çырса позици хушса хурас:

"Хула округĕн квартал уполномоченнăйĕ 1-1-3-02[1]".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕ
94 №